## ЁМĔР САККИ

# Самана çынни

Пĕлетĕн-ха, лайăх пĕлетĕн: ку сăвва чаплă поэтăмăр Петĕр Хусанкай ăна халалламан:

*Художник! Эс мольберт умне тăрсассăн*
*Сасартăках шăпăртланать ман сассăм.*
*Куçа кăна таçта аяккаллах*
*Сан картину туртать, туртать çаплах...*

Çапах та (çакна эпĕ тахçанах асăрханă) Владимир Агеев куравĕнче çав йĕркесем аса килеççĕ-килеççех, ăшунта малалла каласа каятăн:

*Мăян йăранлă, ансăр, саплăк-саплăк*
*Ана çинче тар-шурлă та асаплă.*
*Çынсем тертленнĕ, тарăхнă ялан.*
*Эс урăхла сăнсем куран паян:*
*Вĕçĕ-хĕррисĕр, тикĕс ылтăн тулă,*
*Хаваслă питсенче вылять йăл кулă...*



*«В.И. Агеев».*
*В.Романов картини. 2012 ç.*

Кунта вара сывлăш çавăрса янă пекех «шăпăртланатăн». Сăлтавĕ тахçанхи пĕлĕшĕмĕн пултарулăхĕнчи тĕп тема çавах юлнинче: вăл – тăван халăхăн историйĕ. Çăмăл пулман-çке ун шăпи. Çавăнпа картинăсенче «хаваслă сăнсене» сайра кураятăн.

Акă мĕн çырнă Раççей халăх художникĕ, Раççей художество Академийĕн член-корреспонденчĕ Ю.В.Жульев профессор: «Владимир Агеев. Чăваш халăх художникĕ. Эпĕ пиншер талантлă художника пĕрлештерекен Раççей художникĕсен Союзĕн секретарĕ, апла пулин те çак тĕлĕнмелле çыннăн пултарулăхне аван пĕлетĕп... Владимир Иванович Чăваш наци культурине тĕплĕн пĕлет, ăна унăн сăнарлă ӳнерĕ çывăх та хаклă, чунĕпе вăл тата поэт та, музыкант та. Агеевăн кисчĕпе калемĕ авалхи чăваш паттăрĕсен, туррисен, тахçанхипе хальхи кунăн пантеонне чĕртсе тăратнă».

«Чăваш энциклопедийĕнче» (Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви, 2006) ун çинчен акă мĕн пĕлетпĕр:

*Агеев Владимир Иванович график, живописец 1932 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче Елчĕк тăрăхĕнчи Аслă Елчĕкре çуралса ӳснĕ. СССР художникĕсен Союзĕн членĕ (1970). Ӳнер енне ачаллах туртăнма ашшĕпе амăшĕ витĕм кӳнĕ – пĕри халăх ăсти, тепри тĕрĕçĕ. Шупашкарти художество училищинчен вĕренсе тухнă. Диплом ĕçĕ «Сунарçăсем» картина (живопись) пулнă. Унăн пултарулăхне Ренессанс*

*тапхăрĕнчи ăстасем (А.Дюрер, З.Босх, Ф.Гойя т.ыт.те) витĕм кӳнĕ. Чăваш кĕнеке издательствинче, «Капкăн» журналта вăй хунă.*

*Тĕп ĕçĕсем: «Хĕр-тантăшсем» (1972), «Елчĕкри пасар», «Кĕтӳ» (1985), «К.В.Иванов 1912 çулта вăйă уявĕнче» (1989), «921 çулта Пăлхар ханĕ Алмуш Багдадран килнĕ элчĕсене йышăнать», «Сăвар хулине монгол-тутарсенчен хӳтĕлени. 13 ĕмĕр», «Чăвашсене тĕне кĕртни». 18 ĕмĕр» (1999-2000), «Чăвашсен вăйă карти (1971-72), «Шăпа» (1971), «Аманнă Пегас» (1972), «Асатте каласа кăтартатчĕ» (1972), «Çăл патĕнче» (1985).*

*В.С.Алентейĕн «Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет» (1962), М.Ф.Федоровăн «Арçури» (1972-1973), А.С.Гринăн «Кĕрен парăс» (1979), «Чăваш легендисемпе юмахĕсем» (1979), А.А.Трофимовăн «Асамлă тĕрĕ» (1981), М.Н. Юхман «Авалхи чăвашсем» (1998) кĕнекисене илемлетнĕ.*

*Карикатурăпа сатира ӳкерчĕкĕсем нумай (1956-91). Унăн графикин техники ксилографи евĕрлĕ, литографие çывăх; живописĕ çутă палитри тĕлĕшпе кăткăс, ăна тепĕр хут ӳкерейместĕн. Картинисенче метафора, ытарлă калани, лиризм, гротеск (ӳстерсе кăтартни) сисĕнет, философилле сăнарлăх пысăк вырăн йышăнать. Халăхăн сăнарлă искусствине аталантарас, унăн авалхи тата хальхи пурнăçне уçса парас, кăмăл-туйăмне, психологине, эстетикине, этикипе философине уçса парас тĕлĕшпе художник питĕ нумай вăй хунă.*

В.В.Агеев 80 çул тултарнине халалласа Шупашкарта пысăк курав пулчĕ. Курма пыракансем те, ĕçтешĕсем те унăн картинисене пысăка хурса хакларĕç, ăсталăхĕ халĕ те тивĕçлĕ шайра пулнишĕн тĕлĕнчĕç, чун-чĕререн савăнчĕç. Эпир меллĕ самант тупса художника темиçе ыйту парас терĕмĕр.

**К.** Çынра Эсир чи малтан мĕне хаклатăр?

**А.** Тӳрĕ чунлă пулнине. Эпĕ аннерен вун иккĕре юлнă. Вăл мана çав ырă ене парса хăварма ĕлкĕрнĕ. «Нихçан та ан суй», – тесе вĕрентетчĕ. Тем те пулать пурнăçра. Пĕррехинче манран пĕр пăтăрмах çинчен ыйтса пĕлчĕç çынсем. Тĕрĕссине каларăм. «Мĕншĕн йышăнтăн-ха?» – пăшăрханчĕ анне. Эпĕ ăна куçран пăхрăм. «Тĕрĕс тунă, ачам, яланах çапла пул», – тесе пуçран ачашларĕ. Сăмах илтме тиврĕ пулин те, ӳпкелешмерĕ пĕрре те.

**К.** Художник пулас ĕмĕт хăш вăхăтра пуçа кĕнине астумастăр-и?

**А.** Çерем çуркунне сăмсаланнă пекех пулса иртнĕ. Çанталăк тепĕр чухне сивĕ тăрать-ха, пурпĕрех курăк тухасшăн. Ачалăхăм хаяр вăрçă вăхăчĕпе тĕл килнĕ пулин те, халăх хуçăлса ӳкменни хавхалантарнă, çавна мухтас туйăм вăраннă.

**К.** Аваллăха сăнарлас туртăм мĕнрен килет вара?

**А.** Елчĕк тăрăхĕнче çуралса ӳснĕрен тесе çирĕплетсех калама пултаратăп. Вырăнĕ çапларах кунта. Ака-суха тăвакан арçынсен лашисене хăвăртрах тăварма, вĕсене утланса тăван çĕре тăшмансенчен чукмарпа сыхлама час-часах тивнĕ. Ентешĕмсен паттăрлăхне пĕчĕкренех илтсе ӳснĕ эпĕ.

**К.** Авалхи паттăрсене, историре палăрнă çынсене мĕнле ӳкерме пултартăр? Чылайăшĕн сăнĕсем ниçта та юлман-çке?

**А.** Пĕр-пĕр паттăр мĕнлерех пулма пултарни пирки нумай шутласа çӳретĕн, ĕç-хĕлне тĕпчетĕн, тĕмсĕлетĕн, тĕлĕкре те курма пуçлатăн вĕсене. Йăнăшмастăп



*1912 ҫулта К.В.Иванов чăваш вăййин уявĕнче. 1989 ç.*



*Авалхи чăвашсем. 2003 ç.*

пулас. Куракансем час-часах килĕштереççĕ ман геройсене.

**К.** Эсир лашасене ўкерме кăмăллатăр. Мĕнрен килет ку?

**А.** Лаша вăл чăвашăн шанчăкĕ пулнă ялан. Унпа ĕçлесе çăкăр çиме пултарнă, тăван çĕре те унпах тăшмансенчен сыхланă. Тепĕр сăлтавĕ – тĕссен вылявĕ илĕртнинче, ăна тĕрĕс ярса тытма тăрăшнинче. Вăйлă лаша нихçан та тĕк тăмасть. Эппин тĕссен сĕмĕсене те кăтартма йывăр.

**К.** Сирĕн картинăсенче чăваш хĕрарăмĕсем ялан тенĕ пекех чипер. Арçыннисем вара урăхла. Филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Михаил Романович Федотов профессор кăмăлсăрччĕ чылай чухне. «Агеев чăваш арçыннинчен кулать, кукăр уралла, хĕсĕкрех куçлă кăтартать», – тетчĕ вăл.

**А.** Михаил Романовича эпĕ лайăх пĕлнĕ. Патвар та хитреччĕ. Хисепленĕ ăна яланах. Вăл чăвашшăн шухăшлакан çынччĕ. Чăваш паттăрĕсем ман пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ. Сăн-сăпачĕпе, пĕвĕ-сийĕпе, хул-çурăмĕпе. Пирĕн чăваш халăхĕ тĕрлĕ сăн-сăпатлă. Ку вăл ытти халăхсемпе хутшăнса кайнинчен килет. Ман тĕллевĕм – курăнман чуна кăтартасси. Çын вăл унра çынлăх пулнипе тата чунĕпе çеç хăйĕн ятне тивĕçеет. Хитре мар хĕрарăм çук теççĕ.



*Анна кушаксемпе. Фрагмент. 1982 ç.*

Хĕрарăм вăл – пурнăç пуçламăшĕ, пурнăç тыткăчи – ун аллинче. Аллинче тени тивĕçтерсех те çитереймест – унăн ырă кăмăлĕнче.

**К.** Апла пулсан, мĕншĕн Сирĕн хăш-пĕр картинăра хĕрарăм шуйттана аса илтерет? Сăмахран, илер-ха «Мучи шуйттансем хуш-шинче» е «Юрату тамăкĕ» картинăсене. Хĕрарăмсем пуç тӳпинчен чĕркуççи таран пăхсан – чăн-чăн пикесем, вĕсен сăнĕ-пуçĕ, кăкăрĕсем, пĕвĕ-сийĕ, пĕççисем чуна çӳçентермелле илемлĕ. Капла асăрхамастăн та, тимлĕрех пăхсан урисем качаканнине куратăн.

**А.** Картинăра мучи манăн тискер мар. Урисем те çыннăнах, анчах çӳç айĕнче икĕ майрака палăрать. Аллегори кунта. Пĕр çырмара шыва иккĕ кĕме çук тенĕ пекех лайăх картинăна



*Мучи шуйттансем патĕнче хăнара. 1980 ç.*

та иккӗ курма ҫук. Йӑлтах кӑмӑл-туйӑмран килет. Чун ватӑлмасть теҫҫӗ. Мучине астарса янӑ ҫавӑ, усала кӑларнӑ, малашӗ пирки шутлаттарма мантарнӑ: арӑмӗ те, ачи-пӑчи те кирлӗ мар ӑна. Капла илсен, хӗрарӑмсем манӑн яланах илемлӗ.

«Энӗш хӗрринче канни», «Хӗрсем Атӑл хӗрринче» картинӑсем те ҫавна ҫирӗплетеҫҫӗ. «Шыва кӗрекенсем» картинӑра армак-чармак йывӑҫ ҫинче шуйттан хӗрсене куҫӗсемпе ҫисе ярас пек пӑхса ларать. «Хӗр вӑрлакансенче» вӑйлӑ арҫынсемех вырӑх ураллӑ.

**К.** Сирӗн картинӑсенче ӳсен-тӑран, йывӑҫсем пурнӑҫри пек мар теҫҫӗ.

**А.**Тӗрӗсех ку. Эпӗ фотограф мар. Халӗ фотографи питӗ вӑйлӑ аталаннӑ. Манӑн тӗп тӗллев – кашни йывӑҫ, унӑн туратти, ҫулҫи мӗн те пулин калатӑр, туйӑм ҫураттӑр.

**К.** Шкулта вӗрентекенсенчен редакцие пӗррехинче ҫакнашкал ҫыру килчӗ. Вӗсем «Нарспи» поэмӑна Миттов ӳкерчӗкӗсемпе илемлетнӗшӗн тарӑхса ҫыраҫҫӗ. Ачасене кӑтартма та ҫук, сенӗк-кӗрепле ал-ураллӑ ҫынсене курсан ахӑлтатса кулаҫҫӗ-мӗн. Нарспи Константин Иванов ҫырса кӑтартнӑ пек хитре мар. Э.Юрьевӑн иллюстрацийӗ те килӗшсех каймасть – Нарспи ытла та шуранка, чирлӗ сӑнлӑ. Сизов Нарспийӗ сӑнӗпе те, чунӗпе те илемлӗ туйӑнать имӗш.

**А.** Виҫҫӗшӗ те вӗсем хӑйсене евӗрлӗ художниксем. Ӑнланма та вӗренмелле. Эпӗ те «Нарспи» теминчен пӑрӑнса юлман. Чи трагедиллӗ самантсене ӳкерсе кӑтартма тӑрӑшрӑм. Сӑмахран, икӗ ҫамрӑк ҫӑл патӗнче тӗл пулнине. Чунӗсем вутри пек ҫунаҫҫӗ, ҫапах та хитрелӗхӗсене йывӑр хуйхӑ та хупласа хураймасть. Нарспи чунӗпе вӑрманта мӗн пулса иртнине сӑнарлама йывӑрах та пулмарӗ. Иванов ӑна питӗ витӗмлӗ, куҫ умне тухса тӑмалла кӑтартнӑ.

**К.** Эсир чӑваш ҫыравҫисемпе ҫыхӑну тачӑ тытатӑр. Ятарлӑ ярӑм та пур. «Малашлӑх пирки шухӑшласа» ят панӑ пӗр картинӑна. Унта чӑваш интеллигенцийӗн ушкӑнне (ҫыравҫӑсене) куратпӑр. Пурте ят-сумлӑскерсем. Чи малти ретре вара пӗр палламанскер ларать. Абстрактлӑ сӑнар. Мӗне пӗлтерет ку?

**А.** Пирӗн халӑх талантран хӗсӗр мар. Петӗр Хусанкайпа Ухсай Яккӑвӗ ятне пӗтӗм Совет Союзӗ пӗлетчӗ, хисеплетчӗ. Хветӗр Уяр «Таната», Александр Артемьев «Салампи», Илпек Микулайӗ «Хура ҫӑкӑр» чаплӑ романсем парнелесе хӑварайрӗҫ халӑха. Ҫавӑн йышши хайлавсем халӗ те кӗтес килет. Чӑваш ҫынни уҫлӑха чи малтисен ретӗнче ҫул уҫса пӗтӗм тӗнчене тӗлӗнтерме хал ҫитернӗ. Пултарулӑх хастарӗсен мӗншӗн кая юлмалла? Ҫеҫпӗл калашле, эс килӗн, килӗн тӗнчене. Ҫавна ӗненсе хамӑн картинӑна «Малашлӑх пирки шухӑша кайни» ят патӑм ӗнтӗ. Ҫав малти ретре лараканскер камне, шел пулин те, пӗлейместӗп-ха.

**К.** Каҫарӑр-ха, тен, Сире килӗшсех кайман ыйту панӑшӑн. Ку ыйту манӑн та мар-ха. Ҫынсем тӗлӗнеҫҫӗ: Эсир халӗ те Раҫҫей халӑх художникӗ мар. Вӗсен шучӗпе, Эсир чи тивӗҫлисенчен пӗри.

**А.** Чӑнах та, кун пирки калаҫма кирлӗ те мар. Эпӗ хама пайсӑр юлнӑ ҫын вырӑнне хумастӑп. Манӑн пурнӑҫра чунтан юратнӑ арӑм пур, апла эпӗ хӗрарӑм юратӑвне юрӑхлӑ пулнӑ, ҫакӑ хӑех – чи пысӑк телей. Халӑх ӗҫӗме хакларӗ. Хальчченех юратнӑ ӗҫӗм алран каймасть. Курав ӑнӑҫлӑ иртрӗ. Мускавра та ӑна йӗркелес тесе хыпса ҫунакансем тупӑнчӗҫ. Ҫичӗ картинӑна Хусанта кӑтартма кӑмӑл турӗҫ, вуннӑшне Пушкӑртстан йышӑнчӗ.



*Малашлăх çинчен шухăшласа (чăваш çыравçисем). 1982 ç.*

Хальхи çамрăксен шăпи пăшăрхантарать мана. Таланта çул уçма питĕ кансĕр. Пĕтĕмпе укçапа виçесшĕн. Эпир яш чухне таланта асăрхаса пулăшма тăрăшатчĕç. Лабораторисем паратчĕç ĕçлеме. Картинăсене вĕсенче упрама май пурччĕ. Халĕ авă хамăр укçа-тенкĕпе тутарнăскерсенех туртса илесшĕн хыпăнаççĕ. Çав лабораторисем вырăнне пĕр-пĕр çĕвĕ фабрики уçсан хула тупăш ытларах илет имĕш. Чăваш халăхне нихăçан та çăмăл пулман. Эпир выçăллă-тутăллă ӳснĕ, хура-шурне пайтах курнă. Вăрçă айăпне пула. Вĕреннĕ чухне пурăнмалли кĕтес çукран путвалсенче çĕр каçаттăмăр. Чăтнă. Чăваш ятне çĕре ӳкермен. Хальхи çамрăксене те чăтăмлă пулма сунатăп.

**К.** Эсир хăвăр пурнăçăрпа кăмăллă. Çакă питĕ савăнтарать. Чи пысăк ĕмĕтĕр мĕн Сирĕн?

**А.** Нумаях пулмасть кăна сакăр вунна çитме ĕмĕтленеттĕм. Туса пĕтермен ĕçсем чылай пулнă пек туйăнатчĕ. Халĕ Турăран тепĕр пилĕк çул ыйтас кăмăлăм пур. Хавхалану чакмарĕ-ха çак хушăра.

**К.** Петĕр Хусанкай М.С. Спиридонова халаллана сăввинче «... художник – самана çынни вăл», – тет. Хăвăра çавăн пек хаклама пултаратăр-и?

**А.** Калама кансĕр. Тăван çĕршыв пирки шутламан мар эпĕ. Ăна ăша хывнă. Картинăмсенче – халăх шăпи, кун-çулĕ. Историе асра тытни – саманапа тан пынине пĕлтерет пуль.

**Василий КОШКИН-КЕРВЕН**